# СӐВАПЛӐ ПАВЕЛ АПОСТОЛ КОРИНФРИ ЁНЕНЕКЕНСЕМ ПАТНЕ ЯНӐ ПӖРРЕМӖШ ҪЫРУ

### 1-мӗш сыпӑк

*Саламлани тата тав туни*

1 Турӑ ирӗкӗпе Иисус Христос апостолӗ пулма чӗнсе илнӗ Па-
велран тата Сосфен тӑванӑмран – 2 Коринфри Турӑ Чиркӗвне,
Христос Иисус урлӑ тасалнӑ ёненекенсене, сӑваплӑ пулма чӗнсе
илнисене, Иисус Христос Хуҫамӑрӑн ятне – пире те, вӗсене те
Ҫӑлаканӑн ятне – пур ҫӗрте те асӑнакансене пурне те. 3 Сире Ат-
те Туррӑмӑртан тата Иисус Христос Хуҫамӑртан ырӑлӑхпа канӑҫ-
лӑх пултӑр.

4 Эпӗ сирӗншӗн, Иисус Христос урлӑ Турӑ сире ырӑлӑхне па-
нӑшӑн Туррӑма тӑтӑшах тав тӑватӑп. 5 Унпа пӗрлӗхлӗ пулса эсир
мӗн пур пултарулӑх тӗлӗшӗнчен пуйрӑр: тем тӗрлӗ сӑмах, тем
тӗрлӗ пӗлӳ ытлӑн-ҫитлӗн илтӗр. 6 Ӗнтӗ эпир Христос ҫинчен
пӗлтерни сирӗн ӑшӑрта ҫирӗпленчӗ. 7 Ҫапла вара, сирӗн, Иисус
Христос Хуҫамӑр килессе кӗтекенсен, пултарулӑх тӗлӗшӗнчен
ҫитменни нимӗн те ҫук. 8 Иисус Христос Хуҫамӑрӑн кунӗнче
сирӗн Ун умне пӗр айӑпсӑр тӑмалла пултӑрччӗ тесе, Вӑл сире
юлашки вӑхӑтченех ҫирӗплетсе тӑрӗ. 9 Турра шанӑр: Вӑл сире Хӑ-
йӗн Ывӑлӗпе Иисус Христоспа, пирӗн Хуҫамӑрпа, пӗрле пул-
машкӑн чӗнсе илнӗ.

*Ӗненекен ушкӑнри харкашусем*

10 Эй, тӑвансем! Иисус Христос Хуҫамӑр ячӗпе тархаслатӑп
сире: пурте шӑкӑл-шӑкӑл калаҫса, харкашмасӑр-тумасӑр пурӑ-
нӑр; пӗр кӑмӑллӑн, пӗр шухӑшлӑн ҫӳрӗр. 11 Мӗншӗн тесен, тӑва-
нӑмсем, Хлоя кил-йышӗнчисем мана сирӗн хушшӑрта харкашу-
сем пурри ҫинчен пӗлтерчӗҫ. 12 Эпӗ акӑ мӗн пирки каласшӑн.
Сирӗнтен кашниех: «эпӗ Павел майлӑ», «эпӗ Аполлос майлӑ»,
«эпӗ Кифа майлӑ», «эпӗ вара Христос майлӑ» тесе ҫӳрет. 13 Хрис-
тос пайланса кайнӑ пулать-и вара? Мӗн, сирӗншӗн Павела пӑта-
ланӑ-и? Сире Павел ячӗпе тӗне кӗртнӗ-и? 14 Криспсӑр тата Гаий-
сӗр пуҫне эпӗ сирӗнтен нихӑшне те тӗне кӗртменнишӗн Турра
тав тӑватӑп. 15 Эппин, сирӗнтен пӗри те ман ятӑмпа тӗне кӗнӗ те-
се калама пултараймасть. 16 Тата эпӗ Стефан кил-йышӗнчисене
шыва кӗртнӗччӗ, урӑх кама та пулин тӗне кӗртнине астумастӑп.
17 Христос мана тӗне кӗртме мар, Ырӑ Хыпар пӗлтерме янӑ.
Христос хӗресӗн хӑватне ҫухатас марччӗ тесе манӑн ҫав ӗҫе хама
ӑсла хумасӑр тумалла.

*Христос — Туррӑн хӑвачӗпе ӑслӑлӑхӗ*

18 Хӗрес ҫинчен вӗрентни вӑл пӗтмеллисемшӗн — ӑссӑрлӑх,
пирӗншӗн, ҫӑлӑнмаллисемшӗн — Турӑ хӑвачӗ. 19 Мӗншӗн тесен
Ҫырнинче ҫапла каланӑ: «Эпӗ ӑслисен ӑслӑлӑхне аркатӑп, тӑн-
лисен тӑнлӑхне сирсе ярӑп». 20 Ӑҫта ӑсли? Ӑҫта саккуна вӗренте-
кен? Ӑҫта ҫак тӗнчери тавлашу ӑсти? Турӑ ҫак тӗнчери ӑслӑлӑхран
ӑссӑрлӑх туман-и? 21 Мӗншӗн тесен Турӑ ӑслӑлӑхне пӗлмешкӗн
ҫак тӗнче ӑслӑлӑхӗ ҫителӗксӗр. Ҫавӑнпа та Турӑ ӗненекенсене
ӑссӑр пек туйӑнакан ӳкӗтпе ҫӑлма кӑмӑл тунӑ. 22 Иудейсем хӑват
кӑтартмашкӑн ыйтаҫҫӗ, грексем ӑслӑлӑх шыраҫҫӗ. 23 Эпир вара
пӑталанӑ Христос ҫинчен ӳкӗтлесе вӗрентетпӗр. Иудейсемшӗн
Вӑл такӑнса ӳкмелли чул, грексемшӗн — пуҫа вырнаҫми япала.
24 Анчах та чӗнсе илнисемшӗн — иудей-и вӑл, грек-и — Христос —
Туррӑн хӑвачӗпе ӑслӑлӑхӗ. 25 Мӗншӗн тесен Туррӑн ӑссӑрлӑхӗ те-
кенни этем ӑслӑлӑхӗнчен ҫӳллӗрех, Туррӑн вӑйсӑрлӑхӗ текенни
этем вӑйӗнчен хӑватлӑрах.

26 Эй, Турӑ чӗнсе илнӗ тӑвансем! Хӑвӑр ҫине пӑхӑр-ха. Сирӗн
хушшӑрта этемле виҫепе ӑслисем, вӑйлисем, чаплӑ йӑхран текен-
нисем нумай мар. 27 Анчах та Турӑ ӑслисене намӑса хӑвармашкӑн

çак тĕнчере ăссăр текеннисене, вăйлисене намăса хăвармашкăн çак
тĕнчере вăйсăр текеннисене суйласа илнĕ. 28 Чаплисене пăрахăç
тумашкăн Турă тĕнчере чапсăррисене, мĕскĕннисене, ним тĕшне
тăманнисене суйласа илнĕ. 29 Çакна Турă Хăйĕн умĕнче никам та
мăнкăмăлланса ан мухтантăр тесе тунă. 30 Турă ырăлăхне пула
эсир Иисус Христоспа пĕрлĕхлĕ. Турă Ăна пирĕн ăслăлăх та, тӳ-
рĕлĕх те, сăваплăх та, тӳлевлĕх те тунă. 31 Эппин, Çырнинче ка-
ланă пек: «мухтанас текен Турăпа мухтантăр».

## 2-мĕш сыпăк

*Пăталанă Христос çинчен пĕлтересси*

1 Çапла вара, тăвансем, эпĕ сирĕн патăра Турă пĕлтернине хы-
парлама пырсассăн хама ăсла хурса тата япшар чĕлхеллĕн калаç-
марăм. 2 Мĕншĕн тесен эпĕ сире пăталанă Иисус Христос çинчен
кăна каласа парас терĕм. 3 Сирĕн патăра пынă чухне эпĕ халсăрч-
чĕ, хăраса чĕтреттĕм, питĕ пăлханаттăм. 4-5 Сирĕн ĕненĕвĕр этем
ăслăлăхĕ çинче мар, Турă вăй-хăвачĕ çинче никĕслентĕр тесе эпĕ
сире этем ăсĕн витĕмлĕ сăмахĕсемпе мар, Святой Сывлăш хăва-
чĕпе вĕрентрĕм, ӳкĕтлерĕм.

*Турă Хăйĕн Сывлăшĕ урлă уçса пани*

6 Ăслăлăха вара эпир чун-чĕмпе аталанса çитнисене ӳкĕтлесе
вĕрентетпĕр, анчах вăл çак тĕнчен, çак тĕнчери пĕтес пуçлăхсен
ăслăлăхĕ мар. 7 Эпир Туррăн вăрттăн, халиччен пытаранса усран-
нă ăслăлăхне ӳкĕтлесе вĕрентетпĕр. Пире мухтава кăлармашкăн
çав ăслăлăха Турă тĕнче пуçланиччченех хатĕрлесе хунă. 8 Вăл ăс-
лăлăха çак тĕнчери пуçлăхсенчен пĕри те пĕлеймен. Пĕлнĕ пул-
сассăн вĕсем мухтав Хуçине пăталамĕччĕç. 9 Çырнинче çапла
каланă: «Хăйне юратакансем валли Турă мĕн хатĕрлесе хунине
пĕри те куçпа курман, хăлхапа илтмен, ăспа та шухăшласа илей-
мен». 10 Пире вара çавна Турă Хăйĕн Сывлăшĕ урлă уçса пачĕ,
мĕншĕн тесен Сывлăш пĕтĕмпех, çав шутрах Туррăн тĕпсĕрлĕх-
не те, тишкерме пултарать. 11 Çын шухăшне этемсенчен кам пĕл-
ме пултарĕ? Çав çын ăшĕнчи чун-чĕм кăна пĕлеет. Çавнашка-
лах Турă шухăшне те Турă Сывлăшĕ кăна пĕлет. 12 Анчах та
эпир, Турă хамăра мĕн панине пĕлес тесе, çак тĕнчен чунне мар,
Турăран килекен Сывлăша илтĕмĕр. 13 Турă Сывлăшĕллĕ пулас

текенсене Сывлӑш ҫинчен каланӑран ҫавсем ҫинчен йӑлтах эпир
этем ӑслӑлӑхӗнчен килекен сӑмахсемпе мар, Святой Сывлӑшран
килекен сӑмахсемпе хыпарлатпӑр. [14]Хӑй чунне шанакан ҫын Ту-
рӑ Сывлӑшӗнчен килекен ҫав чӑнлӑха йышӑнаймасть, ӑна ӑссӑр-
лӑх тесе шухӑшлать. Ҫав чӑнлӑха вӑл ӑнланаймасть, мӗншӗн те-
сен ӑна Сывлӑш урлӑ кӑна хаклама пулать. [15]Турӑ Сывлӑшӗллӗ
ҫын йӑлтах хаклама пултарать, ҫыннине хӑйне никам та хаклай-
масть. [16]Хуҫа Турра канаш памашкӑн Унӑн ӑс-хакӑлне пӗлекенӗ
пур-и? Пирӗнте вара — Христос ӑсӗ.

### 3-мӗш сыпӑк

*Турӑшӑн пӗрле ӗҫлекенсем*

[1]Эй, тӑвансем! Ӗнтӗ эпӗ сирӗнпе Сывлӑшшӑн пурӑнакансемпе
калаҫнӑ пек мар, ӳтшӗн пурӑнакансемпе калаҫнӑ пек, Христос
ӗненӗвӗнчи пӗчӗк ачасемпе калаҫнӑ пек калаҫрӑм. [2-3]Ӳтшӗн пу-
рӑннӑран эсир хытӑ ҫимӗҫ ҫиейместӗрччӗ, халӗ те шӑл витерей-
местӗр, ҫавӑнпа эпӗ сире сӗтпе тӑрантартӑм. Сирӗн хушшӑрта
кӗвӗҫӳ, харкашу, хирӗҫӳ пур пулсассӑн эсир ӳтшӗн пурӑнакансе-
мех мар-и вара? Этем йӑли-йӗркипе пурӑнакансемех мар-и ва-
ра? [4]Енчен те пӗри: «Эпӗ Павел майлӑ», тепри: «Эпӗ Аполлос
майлӑ», — тет пулсан, эсир ӳтшӗн пурӑнакансем кӑна мар-и?
[5]Павел камах вара? Аполлос камах вара? Сире Турӑ патне илсе
пынӑ тарҫӑсем кӑна. Ҫак ӗҫе кашниех Хуҫа Турӑ хӑйне панӑ
пултарулӑхне кура тӑвать. [6]Эпӗ акрӑм, Аполлос шӑварчӗ, анчах
та ӳстерекенӗ — Турӑ. [7]Ҫавӑнпа акакан та, шӑваракан та нимех
те мар, пурте ӳстерекен Турӑран килет. [8]Акакан та, шӑваракан
та пӗр ӗҫех тӑваҫҫӗ, анчах та вӗсенчен кашниех ӗҫне кура сӑвап
илӗ. [9]Мӗншӗн тесен эпир — Турӑшӑн пӗрле ӗҫлекенсем, эсир —
Туррӑн уй-хирӗ, Туррӑн ҫурчӗ.

[10]Хама панӑ Турӑ ырӑлӑхне пула эпӗ, ҫурт тӑвакан ӑста пек,
никӗс хыврӑм, тепри ҫав никӗс ҫинче ҫурт хӑпартать. Эпӗ хам
епле ӗҫлетӗп-ши тесе, харпӑр хӑй асӑрхантӑр. [11]Мӗншӗн тесен
хывнӑ никӗс вӑл — Иисус Христос. Унран урӑххине никам та хы-
ваймӗ. [12]Ҫав никӗс ҫине кам мӗнрен ҫурт хӑпартни: ылтӑнран-и,
кӗмӗлтен-и, хаклӑ йышши чулсенчен-и, йывӑҫран-и, хыт-хура-
ран-и, улӑмран-и, — [13]кашнин ӗҫӗ юлашки кун палӑрӗ. Ҫав кун
вутланса килӗ, вара кашнин ӗҫӗ мӗн тӗшне тӑни вутпа тӗрӗсленӗ.

14 Камӑн ӗҫӗ вут витӗр тухайӗ, ҫав сӑвапа тивӗҫ пулӗ. 15 Камӑн ӗҫӗ
вутра ҫунса кайӗ, ҫав инкек тӳсӗ. Ҫынни хӑй вара аран-аран,
вутран хӑтӑлнӑ пек, хӑтӑлӗ. 16 Хӑвӑр Турӑ ҫурчӗ пулнине, хӑвӑрта
Турӑ Сывлӑшӗ пуррине пӗлместӗр-им эсир? 17 Турӑ ҫуртне арка-
такана хӑйне Турӑ аркатать, мӗншӗн тесен Турӑ ҫурчӗ таса; ҫав
ҫурт вӑл — эсир.

18 Хӑвӑра хӑвӑр ан улталӑр. Ҫак тӗнчере кам хӑйне ӑслӑ тесе
шутлать, чӑннипех те ӑслӑ пулас тесессӗн ӑссӑр пултӑр. 19 Мӗн-
шӗн тесен ҫак тӗнче ӑслӑлӑхӗ Турӑ умӗнче — ӑссӑрлӑх. Ҫырнинче
ҫапла каланӑ: «Турӑ ӑсчахсене хӑйсем карнӑ чеелӗх танатипех
тытать». 20 Тепӗр тӗлте тата ҫапла каланӑ: «Ӑсчахсен шухӑшӗсем
усӑсӑррине Хуҫамӑр пӗлет». 21 Ҫапла вара, этемпе никам та ан
мухтантӑр, мӗншӗн тесен пурте сирӗн: 22 Павел та, Аполлос та,
Кифа та, тӗнче те, пурӑнӑҫ та, вилӗм те, хальхи те, пуласси те —
пурте сирӗн. 23 Эсир — Христосӑн, Христос вара — Туррӑн.

### 4-мӗш сыпӑк

*Апостол ӗҫӗ ҫинчен*

1 Ҫапла вара, ӗненекенсен пурин те пире Христос тарҫисем,
Турӑ вӑрттӑнлӑхӗн управҫисем вырӑнне хумалла. 2 Управҫӑ пулма
шаннисен вара пурин те шанчӑклӑ пулмалла. 3 Эсир е ыттисем
ман пирки мӗн шухӑшлани мана ытлах пӑшӑрхантармасть, эпӗ
хама хам та хак памастӑп. 4 Чунӑм тасах пулин те, ҫакӑ мана тӳр-
ре кӑларӗ тесе шухӑшламастӑп. Мана суд тӑваканӗ — Хуҫа Турӑ.
5 Ҫавӑнпа та вӑхӑчӗ ҫитиччен, Хуҫамӑр тепре киличчен никама
та айӑпласа ан калаҫӑр. Вӑл килӗ те тӗттӗмре палӑрманнине ҫут-
та кӑларӗ, вӑрттӑн шухӑшсене те палӑрмалла тӑвӗ. Ҫавӑн чухне
вара кашниех Турӑран хӑйне тивӗҫ мухтавне илӗ.

6 Эй, тӑвансем! Сире ырӑ сунса, мӗн каланине эпӗ Аполлоспа
иксӗмӗр ҫинчен тӗслӗх вырӑнне каларӑм. Ҫырса янинчен ытла
нимӗн те ан шухӑшласа кӑларччӑр, пӗри теприне мала ан хуччӑр
терӗм. 7 Эсӗ ыттисенчен лайӑхрах тесе кам каланӑ? Турӑ панисӗр
пуҫне санӑн мӗн пур? Енчен те Турӑ панӑ пулсан, мӗншӗн эсӗ
илмен пек мухтанатӑн? 8 Эпир чун-чӗм апачӗ ҫисе тӑрантӑмӑр,
пирӗн йӑлтах ҫителӗклӗ тетӗр эсир, хӑвӑра Ҫӳлти Патшалӑха кӗ-
ме тивӗҫлисем пек тыткалатӑр, пирӗнсӗрех чи ҫӳлти шая ҫӗк-
леннӗ. Ах, эсир чӑнахах унта кӗме тивӗҫ пулсанччӗ! Вара эпир те

сирӗнпех пулăттăмăр! 9 Ман шухăшпа, пире Турă мӗскӗнрен те
мӗскӗн, вилме пӳрнӗ чурасенни пек шăпа панă, мӗншӗн тесен
эпир тӗнче кулли пултăмăр, ангелсемпе çынсем те пирӗнтен
кулаççӗ. 10 Эппин эпир Христоса пула ăссăр, эсир вара Христоса
пулах ăслă. Эпир халсăр, эсир вăйлă. Эсир хисеплӗ, эпир чыс-
сăр. 11 Эпир паян кунччен çинӗ-çимен, ӗçнӗ-ӗçмен, тумлан-
нă-тумланман çӳретпӗр, пире хӗнеççӗ, кил-çуртăмăр та çук. 12 Мӗн
пуррине те хамăр алăпа ӗçлесе илкелетпӗр. Пире ятлаççӗ, эпир
ырă сунатпăр; пире хӗсӗрлеççӗ, эпир чăтатпăр. 13 Пире хурлаççӗ,
эпир хамăра хурлакансемшӗн кӗлтăватпăр. Эпир çак тӗнчешӗн
çӳп-çап кăна, пурте халичченех таптакан тусан кăна.

14 Çакна сире намăслантарас тесе мар, савнă ачамсене ӳкӗтле-
нӗ пек ӳкӗтлесе çыратăп. 15 Христос ӗненӗвӗнчи вӗрентӳçӗсем
сирӗн пинӗпех пулин те, аçăрсем сахал. Эпӗ вара, сире Ырă Хы-
пар пӗлтерсе, Христос ӗненӗвӗнчи аçăр пулса тăтăм. 16 Çавăнпа
та сире тархаслатăп: эпӗ Христос евӗрлӗ пулма тăрăшнă пекех,
эсир те ман пек пулма тăрăшăр. 17 Çав сăлтавпах эпӗ сирӗн па-
тăра Тимофея ятăм. Вăл – ӗненӳри савнă ывăлăм, Хуçа Турă
умӗнче шанчăклăскер. Эпӗ Христос çулӗпе епле çӳретӗп, пур
çӗрте те, пур чиркӳсенче те çапла вӗрентетӗп. Ун çинчен Тимо-
фей сире аса илтерӗ. 18 Эпӗ сирӗн патăра пырайман пирки си-
рӗнтен хăшӗ-пӗри мăнаçлансах кайнă. 19 Анчах та, Турă пулăш-
сассăн, эпӗ часах сирӗн патăра çитсе курăп-ха. Ун чухне вара
мăнаçлисен хитре сăмахне мар, ӗненӳ хăватне тӗплӗнрех пӗлӗп.
20 Мӗншӗн тесен Турă Патшалăхӗ хитре сăмахра мар, ӗненӳ хăва-
тӗнче. 21 Ӗнтӗ пынă чухне манăн туяпа пырас-и? Е юратуллă йă-
ваш чунăмпа? Хăшне кăмăллатăр?

## 5-мӗш сыпăк

*Аскăнлăха питлени*

1 Сирӗн хушшăрта аскăнланасси пур текен сăмах тухрӗ. Унаш-
кал аскăнлăха чăн Турра пӗлмен халăхсем хушшинче те курай-
măн: сирӗнтен пӗри амаçурипе пурăнать тет. 2 Сирӗн çавнашкал
хăтланакана хăвăр ушкăнтан хăваласа ямалла. Эсир вара, куля-
нас вырăнне, мăнаçланса çӳретӗр. 3 Кӗлеткемпе сирӗнпе мар
пулин те, чун-чӗмпе эпӗ сирӗнпе. Çавнашкал хăтланакана, хам
сирӗн хушшăрта пулнă пекех, çапла айăп хума шут тытрăм.

4-5 Эсир Иисус Христос Хуçамăр ячĕпе пуху пуçтарăр, чун-чĕмпе
унта эпĕ те пулăп. Иисус Христос Хуçамăрăн кунĕ çитсессĕн çав
çыннăн чунĕ çăлăнтăр тесен, эсир Иисус Христос Хуçамăрăн
хăвачĕпе çав çынна, ӳт-пĕвне вилесле асаплантарма, шуйттан
аллине парăр. 6 Мухтанмалли сирĕн нимех те çук. Сахал кăвас
тĕпĕ пĕтĕм чустана йӳçĕтсе янине пĕлместĕр-им эсир? 7 Эппин,
çĕнĕ чуста пулас тесен, кивĕ кăвас тĕпне хырса тăкăр. Эсир çĕнĕ,
йӳçĕтмен чуста, мĕншĕн тесен пирĕн пасха Путеккине, Христо-
са, пирĕншĕн парнелĕхе кӳнĕ. 8 Çавăнпа та пасхăна кивĕ кăвас
тĕпĕпе – çылăхпа тата усаллăхпа – йӳçĕтсе пĕçернĕ çăкăрпа мар,
тасалăхпа чăнлăхăн тутлăлла пĕçернĕ çăкăрĕпе уявлар!

9 Аскăн çынсемпе хутшăнса ан пурăнăр тесе эпĕ сирĕн патăра
çырнăччĕ ĕнтĕ. 10 Паллах, çак тĕнчери мĕн пур аскăн, çăткăн,
хапсăнчăк, кĕлеткене пуççапакан çынсемпе ан хутшăнăр темес-
тĕп эпĕ. Унашкаллисемпе хутшăнас мар тесен сирĕн ку тĕнчерен
пуçĕпех каймалла пулса тухать. 11 Эпĕ сирĕн патăра хăйсене ĕне-
некен тăванăрсем пек кăтартакан, анчах та аскăн, çăткăн, кĕлет-
кесене пуççапакан, сăмахпа хăртакан, ĕçкĕç, хапсăнчăк çынсем-
пе хутшăнса ан пурăнăр, пĕрле ĕçсе ан çийĕр тесе çырнăччĕ.
12 Ĕненекен ушкăнра маррисене айăпласси ман ĕç-им? Хăвăр
ушкăнрисене вара хăвăрăнах айăпламалла мар-и? 13 Ушкăн ту-
лашĕнчисене Турă айăплĕ. Пăсăк çынна вара хăвăр хушшăртан
хăваласа ярăр.

## 6-мĕш сыпăк

*Турра хисеплеменнисем умĕнче судлашни*

1 Епле-ха тата, пĕр-пĕринпе хирĕçмелли сăлтав тупăнсан, си-
рĕнтен хăшĕ-пĕри ĕненекен ушкăнра мар, Турра хисеплеменни-
сем умĕнче судлашать? 2 Ĕненекенсем çак тĕнчене суд тăвассине
пĕлместĕр-им? Тĕнчене суд тăваканĕсем эсир пулатăр пулсассăн,
чылай пĕчĕкрех ĕçсене хăвăрах суд тума тивĕç мар-и? 3 Эпир ан-
гелсене те суд тăвасса пĕлместĕр-им? Пурăнан пурăнăçри ĕçсене
те хамăр тĕллĕн татса параймастпăр-и? 4 Эсир вара, пурăнан пу-
рăнăçра хирĕçмелли тупăнсассăн, ĕненекен ушкăнра тăман су-
дьясем патне каятăр. 5 Сире намăс пултăр тесе калатăп: тăвансем
хушшинчи ĕçсене татса пама пултаракан ăслă-тăнлă пĕр çын та
çук-и сирĕн? 6 Эсир тăванпа тăван судлашатăр, çитменнине тата

Турра хисеплеменнисем умӗнче. 7 Пӗр-пӗринпе судлашас патнех
ҫитни те сирӗншӗн мӑшкӑл-ҫке. Кӳрентернине чӑтсассӑн аван-
рах марччӗ-и? Ҫухату тӳсни аванрах марччӗ-и? 8 Апла пулинччӗ!
Эсир хӑвӑр кӳрентеретӗр, ҫарататӑр. Кама-ха? Тӑванӑрсене. 9 Тӳ-
рӗ мар ҫынсем Турӑ Патшалӑхне кӗреймессе пӗлместӗр-им? Ан
улталанӑр: аскӑнсем те, кӗлеткесене пуҫҫапакансем те, пӗр-пӗр-
не улталакан мӑшӑрсем те, арҫынпа асакан арҫынсем те, 10 вӑ-
рӑсем те, ҫӑткӑнсем те, ӗҫкӗҫсем те, сӑмахпа хӑртакансем те,
хапсӑнчӑксем те Турӑ Патшалӑхне кӗреймӗҫ. 11 Ҫавнашкаллисем
сирӗн хушшӑрта та пулнӑ. Анчах та эсир шыва кӗнӗ, сӑвапланса
тасалнӑ, Иисус Христос Хуҫамӑр ячӗпе тата Туррӑмӑр Сывлӑшӗ-
пе тӳрре тухнӑ.

*Ӳт-пӳпе те Турра мухтава кӑларӑр*

12 Мана тем тума та юрать, анчах пурте усса каймасть. Ҫапла,
мана тем тума та юрать, анчах манпа нимӗн те ан хуҫалантӑр.
13 Хырӑмшӑн апат пултӑр, апатшӑн хырӑм пултӑр. Анчах та Хуҫа-
мӑр ӑна та, кӑна та пӗтерӗ. Ӳт-пӳ те аскӑнлӑх валли мар, Хуҫа-
мӑр валли; Хуҫамӑр вара – этем валли. 14 Турӑ пирӗн Хуҫамӑра
вилӗмрен чӗртнӗ, Хӑйӗн хӑвачӗпе пире те чӗртӗ. 15 Сирӗн ӳт-пӗ-
вӗрсем Христос ӳчӗн пайӗсем пулнине пӗлместӗр-им? Мӗн, Хрис-
тос ӳчӗн пайӗсене илсе аскӑн хӗрарӑм ӳт-пӗвӗн пайӗсем тумал-
ла-им? Апла мар, паллах! 16 Аскӑн хӗрарӑмпа ҫыхланакан унпа
пӗр ӳт-пӳ пулнине эсир пӗлместӗр-им? «Иккӗшӗ пӗр ӳт-пӳ пу-
лӗҫ», – тенӗ-ҫке-ха Ҫырнинче. 17 Хуҫамӑрпа пӗрлӗхлӗ пулакан
вара Хуҫамӑрпа пӗр чун-чӗмлӗ. 18 Аскӑнлӑхран пӑрӑнӑр: этем тӑ-
вакан кирек епле ҫылӑх та унӑн ӳт-пӗвӗн тулашӗнче. Аскӑн ҫын
вара хӑйӗн ӳт-пӗвне хирӗҫ ҫылӑх тӑвать. 19 Сирӗн ӳт-пӗвӗрсем
Святой Сывлӑшӑн ҫурчӗ пулнине пӗлместӗр-им? Ӑшӑрта Турӑ-
ран илнӗ Сывлӑш пурӑннӑран эсир ӗнтӗ хӑвӑр та хӑвӑрӑн мар.
20 Сире хаклӑ хакпа тӳлесе илнӗ. Ҫавӑнпа ӳт-пӗвӗрпе те, чунӑрпа
та Турра мухтава кӑларӑр: вӗсем Туррӑн.

**7-мӗш сыпӑк**

*Арлӑ-арӑмлӑ пурӑнасси ҫинчен*

1 Арҫын хӗрарӑмпа ҫывӑрса курмасан аванрах тесе ҫырнӑччӗ
эсир ман патӑма. Кунта ҫакна каламалла. 2 Аскӑнлӑха путмалла

ан пултăр тесен, кашни арçыннăн арăмӗ пултăр, кашни хӗрарă-
мăн – упăшки. [3] Упăшкин арăмне юратса пурăнмалла, çавăн пе-
кех арăмӗ те упăшкине юраттăр. [4] Арăмӗ хăйӗн ӳт-пӗвӗпе хуçала-
наймасть, унăн хуçи – упăшки. Çавнашкалах упăшки те хăйӗн
ӳт-пӗвӗпе хуçаланаймасть, унăн хуçи – арăмӗ. [5] Пӗр-пӗринчен
пăрăнса ан çӳрӗр. Пăрăнас пулсан та, пӗр-пӗринпе калаçса та-
тăлса, вăхăтлăха, пӗтӗм чун хавалӗпе типӗ тытасчӗ*, кӗлтăвасчӗ
тесе пăрăнăр. Унтан каллех пӗрле пулăр. Ахальлӗн, хăвăра тытса
чарма йывăррине курса, сире шуйттан илӗртсе улталӗ. [6] Паллах,
çакна эпӗ хушса мар, ирӗк парса калатăп. [7] Ку тӗлӗшӗнчен ма-
нăн пур çынна та хам пек тăвас килет, анчах та кашниех Турă-
ран тӗрлӗ пултарулăх илет: пӗри – апла, тепри – капла.

[8] Мăшăрланманнисене, мăшăрсăр юлнисене вара хам пек хă-
раххăн пурăнни аванрах тетӗп. [9] Чăтаймаççӗ пулсан, авланчăр.
Аскăн шухăшпа çунса çӳриччен авланни аванрах. [10] Мăшăрлан-
нисене вара эпӗ мар, Хуçамăр çапла хушать: арăмӗн упăшкинчен
уйăрăлмалла мар. [11] уйăрăлас пулсассăн, урăх качча каймалла мар
е упăшкипех килӗшӳ тупмалла. Упăшкин те арăмне пăрахмалла
мар. [12] Ыттисем пирки вара çакна каламалла (куна Хуçамăр мар,
эпӗ калатăп): пӗр-пӗр ӗненекен тăванăн арăмӗ ӗненмен çын пул-
сан, анчах та упăшкипе пурăнма килӗшет пулсан – упăшкин ăна
пăрахмалла мар. [13] Ӗненекен арăм та, упăшки ӗненмен çын пул-
сан, анчах арăмӗпе пурăнма килӗшет пулсан, упăшкине ан пă-
рахтăр. [14] Мӗншӗн тесен ӗненмен упăшка арăмӗн ӗненӗвӗ урлă
сăвапланса тасалать; ӗненмен арăм та упăшкин ӗненӗвӗ урлă сă-
вапланса тасалать, унсăрăн сирӗн ачăрсем таса мар пулӗччӗç,
капла – таса. [15] Ӗненмен упăшка е арăм уйăрăласшăн пулсан,
уйăрăлтăр. Кун пек чухне ӗненекен тăванăмăра нимӗн те çыхса
тăмасть. Хуçамăр пире килӗштерсе пурăнма чӗнсе илнӗ. [16] Эй,
арăм! Кам пӗлет, тен, эсӗ упăшкуна çăлăн? Эй, упăшки! Кам
пӗлет, тен, эсӗ арăмна çăлăн?

*Хуçамăр палăртнă пурăнăç*

[17] Эпӗ мӗн пур ӗненекен ушкăнсене çапла хушатăп: кашнин
Турă палăртнă пек, хăйне Хуçамăр мӗнле халлӗн чӗнсе илнӗ, çав-
нашкалах пурăнмалла. [18] Кам та кам хăйне Турă чӗнсе иличчен

---

* [7:5] Хăш-пӗр авалхи ал çырусенче «*типӗ тытасчӗ*» сăмахсем çук.

ӳт кастарнӑ, ҫавӑ ӳт кастарнине ан пытартӑр; кам та кам ӳт кас-
тарман, ан кастартӑр. 19 Ӳт кастарни, ӳт кастарманни пекех,
ниме те пӗлтермест. Чи кирли – Турӑ пил-хушӑвӗсене пӑхӑнса
пурӑнасси. 20 Чӗнсе илнӗ чух хӑвӑр кам пулнӑ, ҫаплипех юлӑр.
21 Хӑвна чӗнсе илнӗ чухне эсӗ чура пулнӑ-и? Ан пӑшӑрхан. Ирӗк-
лӗ пулмашкӑн май килсессӗн те, хӑшӗ лайӑхраххине суйласа ил.
22 Мӗншӗн тесен Хуҫамӑр чӗнсе илнӗ чура вӑл – Хуҫамӑрӑн ирӗ-
ке кӑларнӑ ҫынни. Ҫавнашкалах, ирӗклӗ чух чӗнсе илни – Хрис-
тос чури. 23 Сире хаклӑ хакпа тӳлесе илнӗ, ҫын чури пулмашкӑн
ан килӗшӗр. 24 Эй, тӑвансем! Эппин, чӗнсе илнӗ чухне сирӗнтен
кашни кам пулнӑ, Турӑ умӗнче ҫаплипех юлтӑр.

### *Мӑшӑрланманнисем тата мӑшӑрсӑр юлнисем*

25 Мӑшӑрланманнисем пирки вара Хуҫамӑр мӗн хушса хӑварнӑ –
пӗлместӗп. Мана Хуҫамӑр Хӑйӗншӗн шанчӑклӑ пулмашкӑн ырӑ-
лӑх панӑ, ҫавӑнпа канаш паратӑп. 26 Ман шутӑмпа, хальхи йывӑр
саманара ҫынна мӑшӑрланмасӑр пурӑнни аванрах. 27 Эсӗ арӑм-
лӑ-и? Эппин, уйӑрӑлма сӑлтав ан шыра. Арӑмсӑр юлнӑ-и? Эп-
пин, урӑх арӑм ан шыра. 28 Тепӗр тесен, авланни ҫылӑх мар. Хӗр
качча кайни те ҫылӑх мар. Анчах та ку саманара арлӑ-арӑмлӑ пу-
рӑнакансене йывӑр килет, эпӗ сире ҫав йывӑрлӑхран упрасшӑн.
29 Эй, тӑвансем! Эпӗ сире ҫапла калатӑп: вӑхӑт нумаях юлмарӗ.
Малашне арӑмлисем арӑмсӑррисем пек пурӑнччӑр. 30 Йӗрекен-
нисем – йӗменнисем пек, савӑнаканнисем – савӑнманнисем
пек, туянаканнисем – туянманнисем пек пулччӑр. 31 Ҫак тӗнчери
пурӑнӑҫпа пурӑнакансем тӗнчере пурӑнман пек пулччӑр, мӗн-
шӗн тесен ҫак тӗнче сӑнарӗ иртсе каять. 32 Манӑн сире пурӑнӑҫ
хуйхи-суйхинчен хӑтарса хӑварас килет. Авланман ҫын Хуҫамӑр-
шӑн, Хуҫа Турра юрасшӑн тӑрӑшать. 33 Авланни пурӑнӑҫшӑн,
арӑмне юрасшӑн тӑрӑшать. Арӑмпа хӗр хушшинче те уйрӑмлӑх
пур. 34 Ӳт-пӳ тӗлӗшӗнчен те, чун-чӗм тӗлӗшӗнчен те сӑваплӑ пу-
ласчӗ тесе, качча кайманни Хуҫамӑршӑн, Хуҫа Турра юрасшӑн
тӑрӑшать. Качча кайни вара пурӑнӑҫшӑн, упӑшкине юрасшӑн тӑ-
рӑшать. 35 Ҫакна эпӗ сире ҫӑварлӑхласшӑн каламастӑп. Сирӗн пӗ-
тӗмпех йӗркеллӗ пултӑр тесе, пӗтӗм тимлӗхпе Хуҫа Турра чун-чӗ-
ререн парӑнса тӑччӑр тесе – сире усӑллӑ пултӑр тесе калатӑп.

36 Кам хӑйӗн качча кайма вӑхӑт ҫитнӗ хӗрӗ ватта юлни намӑс
тесе шухӑшлать, ҫав хӑй тӑвас тенӗ пек тутӑр, ҫылӑха кӗмӗ. Ун

пек хӗрсем качча кайччӑр. 37 Ҫапах та кам иккӗленӳсӗр, камӑн
хӑйӗн хӗрне качча пама нуша ҫук, анчах та хӑйӗн ирӗкӗпе хӗрне
качча памасӑр упраса хӑварас тет, ҫавӑ аван тӑвать. 38 Ҫавӑнпа та
хӗрне качча паракан аван тӑвать, качча паманни вара тата аван-
рах тӑвать. 39 Саккун арӑмне упӑшки чӗрӗ чухне унпа пӗр ҫыхӑра
пулма хушать. Упӑшки вилсессӗн вара унӑн кама качча каяс ки-
лет, ҫавна кайма ирӗк пур. Анчах та ҫынни Хуҫамӑра ӗненекенс-
кер пулмалла. 40 Ҫапах та, качча каймасан, ҫав хӗрарӑм телей-
лӗрех пулать. Паллах, ку манӑн шухӑш, анчах манра та Турӑ
Сывлӑшӗ пур пулӗ тетӗп.

### 8-мӗш сыпӑк

*Чӳк апат-ҫимӗҫӗ*

1 Халӗ кӗлеткесене чӳклесе панӑ апат-ҫимӗҫ пирки калам. Ун
пирки хамӑрӑн пӗлӳ пурри паллӑ ӗнтӗ, анчах та пӗлӳ пуҫа каҫӑр-
ттарать, юратулӑх вара аталантарать. 2 Кам мӗне те пулин пӗлсе
ҫитрӗм тет, ҫавӑ кирлӗ таран нимӗн те пӗлмест. 3 Турӑ вара Хӑй-
не юратакана пӗлет. 4 Ӗнтӗ чӳклесе панӑ аш пирки. Тӗнчери пуҫ-
ҫапмалли кӗлеткесем ним тӗшне те тӑманнине, Пӗртен-пӗр Ту-
рӑсӑр пуҫне урӑххи ҫуккине эпир пӗлетпӗр. 5 Ҫӗр ҫинче те, тӳпе-
ре те турӑ текенскерсем (вӗсем тата хуҫасем пекех питӗ йышлӑ)
пур теҫҫӗ пулсан, 6 пирӗн вара пӗр Атте Турӑ. Пӗтӗмпех Вӑл пул-
тарнӑ, пурӑнасса та эпир Уншӑн пурӑнатпӑр. Пирӗн пӗртен-пӗр
Хуҫамӑр – Иисус Христос. Пӗтӗмпех Ун урлӑ пултарӑннӑ, эпир
те Вӑл пуртан пурӑнатпӑр. 7 Анчах та пурте ҫакнашкал пӗлӳллӗ
мар. Хӑшӗ-пӗрисем халӗ те кӗлеткесене турӑ вырӑнне хурассин-
чен хӑпса ҫитмен-ха. Ҫавӑнпа та чӳк ҫимӗҫне ҫинӗ чухне ҫакӑ
турра кӳнӗ ҫимӗҫ тесе шутлаҫҫӗ, халсӑр чунлӑскерсем, хӑйсене
хӑйсем ирсӗрленнӗ пек туяҫҫӗ. 8 Анчах та апат-ҫимӗҫ пире Турӑ
патне кӑшт та ҫывхартмасть. Ҫисессӗн те пирӗн нимӗн те хут-
шӑнмасть, ҫимесессӗн те эпир нимӗн те ҫухатмастпӑр. 9 Ҫапах
та эсир чӳк ҫимӗҫне тиркеменни халсӑр чунлисемшӗн такӑнса
ӳкмелли чул пуласран асӑрханӑр. 10 Эсӗ, пӗлӳллӗскер, чӳк вырӑ-
нӗнче ҫисе ларнине курсан, халсӑр чунлисенчен хӑшӗ-пӗрин чӳк
ашне ҫисе пӑхасси килсе каймӗ-и? 11 Ӗнтӗ эсӗ пӗлни халсӑр тӑ-
ванна пӗтермелли сӑлтав пулӗ. Христос ӑна ҫӑлас тесе вилнӗ
вӗт-ха. 12 Ӗненекен тӑванусене хирӗҫ ҫапла майпа ҫылӑх туса,

вӗсен ахаль те халсăр чунне амантса, эсир Христоса хирӗç те
çылăх тăватăр. 13 Çавăнпа та, ӗненекен тăванăма апат-çимӗç та-
кăнтарса ӳкерет пулсан, ăна такăнтарас мар тесе, пачах та аш
çием мар.

## 9-мӗш сыпăк

*Апостол тивӗçӗсем*

1 Эпӗ апостол мар-им? Ирӗклӗ мар-им? Иисус Христоса, ха-
мăр Хуçамăра, хам куçпа хам курман-им? Сире Христоспа
пӗрлӗхлӗ тăваканни эпӗ мар-им? 2 Тен, ыттисем мана апостол
вырăнне хумаççӗ, анчах та сирӗншӗн эпӗ — апостол. Сире эпӗ
Хуçамăрпа пӗрлӗхлӗ турăм, çакă эпӗ апостол пулнине ӗнентерет.

3 Çакă манăн хама айăплакансенчен хӳтӗленни пултăр. 4 Е ӗне-
некенсен пире тăрантармалла мар-им? 5 Е пирӗн хамăр çумра
ӗненекен тăванăмăр — арăм — пулмалла мар-им? Ытти апос-
толсем те, Хуçамăрăн пӗртăванӗсем те, Кифа та авланнă-çке-ха!
6 Е Варнавăпа иксӗмӗрӗн кăна хамăра хамăр тăрантарса пурăн-
малла-и? 7 Çар çынни хăйне хăй тăрантарса пурăнни пур-и? Иçӗм
çырли лартаканӗ çырлине çименни пур-и? Кӗтӳ кӗтекенӗ сӗт ӗç-
менни пур-и? 8 Çакна эпӗ этемле шухăшласа кăна калатăп-и?
Саккун та çавнах каламасть-и вара? 9 Моисей саккунӗнче çапла
çырнă: «Авăн ашакан вăкăрăн çăварне ан хупла». Çакна Турă вă-
кăрсемшӗн куляннипе каланă тетӗр-и? 10 Е çак сăмахсене пирӗн-
шӗн кулянса каланă? Паллах, çакна йăлтах пирӗншӗн каланă,
мӗншӗн тесен хăйӗн пайне илессе шанса суха тăваканăн сухала-
малла, кӗлте çапаканăн çапмалла. 11 Эпир сирӗн ăша чун-чӗм
вăрлăхне акрăмăр, эппин сирӗнтен кӗлеткене усрамалăх пухса
илни ытлашши пулӗ-и?

12 Ыттисем сирӗн патăрта çавнашкал ирӗкпе усă кураççӗ пул-
сан, пирӗн ирӗкӗмӗр тата ытларах мар-и? Анчах та эпир çав
ирӗкпе нихăçан та усă курмарăмăр. Христосăн Ырă Хыпарне пӗл-
терме нимӗн те ан чăрмантартăр тесе мӗн пуррипе çырлахса
пурăнатпăр. 13 Кӗлӗ çуртӗнче ӗçлекенсем кӗлӗ çурчӗн шучӗпе пу-
рăннине пӗлместӗр-им? Парне вырăнӗ умӗнче ӗçлесе тăракансен
вара парнелӗхе кӳнин пӗр пайне илме ирӗк пуррине пӗлмес-
тӗр-им эсир? 14 Ырă Хыпар пӗлтерекенсем ӳкӗтлесе-вӗрентсе хăй-
сене пурăнмалăх ӗçлесе илччӗр тесе Хуçамăр та хушса хăварнă.

15 Анчах та эпӗ çав çӑмӑллӑхсемпе пӗринпе те нихӑçан та усӑ
курмарӑм. Çырасса та çӑмӑллӑх ыйтса çырмастӑп. Мухтанмалли
сӑлтавӑмсӑр тӑрса юличчен эпӗ вилме те хатӗр. 16 Ырӑ Хыпар
пӗлтерни вӑл – мухтанмалли япала мар, манӑн тивӗçӗм. Пӗлтер-
местӗп пулсан – хуйхӑ пултӑр мана! 17 Çак ӗçе эпӗ хам ирӗкпе
тӑватӑп пулсан, паллах, мана тӳлемелле. Енчен те хам ирӗкпе ту-
мастӑп пулсан, шанса панӑ ӗçӗм вара Турӑ умӗнчи тивӗçӗм пу-
лать. 18 Мухтанмалли сӑлтавӑм, тӳлевӗм мӗн вара? Вӑл ак çакӑ:
Христос çинчен эпӗ Ырӑ Хыпар тӳлевсӗрех саратӑп, çав ӗçшӗн
хама тивӗçлине илместӗп.

19 Ирӗклӗ çын пулсан та, тата ытларах çынна çӑласчӗ тесе, эпӗ
пуриншӗн те чура пулса тӑтӑм. 20 Иудейсене Христос майлӑ çавӑ-
рас тесе эпӗ иудейсемпе иудей пек пултӑм, Моисей саккунне
пӑхӑнакансене çӑлас тесе саккуна пӑхӑнакан пек пултӑм. 21 Сак-
куншӑн юттисене çӑлас тесе вӗсемшӗн хам та саккуншӑн ют пек
пултӑм. Çав хушӑрах Моисей саккунне Турӑ умӗнче юта хума-
рӑм, пурӑнасса вара Христос саккунӗпе пурӑнтӑм. 22 Халсӑр чун-
лисене çавӑрас тесе халсӑррисем пек пултӑм. Май пур таран
хӑшне те пулин çӑлса хӑварасчӗ тесе эпӗ пуриншӗн те вӗсем пек
пултӑм. 23 Çакна эпӗ Ырӑ Хыпаршӑн, унӑн ырӑлӑхне ыттисемпе
пӗрле пайласчӗ тесе тӑватӑп. 24 Ӑмӑртура пурте чупаççӗ, анчах
та пӗрне кӑна парне тивӗçнине пӗлместӗр-им эсир? Çав парнене
çӗнсе илес тесе эсир те тӑрӑшӑр. 25 Ӑмӑртӑва хутшӑнмашкӑн пур-
те тӗплӗн хатӗрленеççӗ, ӑна-кӑна питӗ уяса пурӑнаççӗ. Вӗсем
шанакан-типекен пуç кӑшӑлӗ çӗнсе илесшӗн, эпир – шанман-
нине. 26 Çавӑнпа та эпӗ тӗллевсӗр чупмастӑп; аллӑмсемпе сыв-
лӑшра усӑсӑр сулкалашмастӑп, чӑнласах кӗрешетӗп. 27 Çапах та
эпӗ кӗлеткеме хама итлеттерсе пӑхӑнтаратӑп. Çакна эпӗ ыттисе-
не Ырӑ Хыпаршӑн кӗрешме ӳкӗтле-ӳкӗтле хамӑн çав кӗрешӗве
юрӑхсӑр пулас марччӗ тесе тӑватӑп.

## 10-мӗш сыпӑк

*Кӗлеткесене пуççапасран асӑрхаттарни*

1 Эй, тӑвансем! Ман сире çакна пӗлтерес килет: пирӗн мӑн
асаттесем пурте пӗлӗт витӗмӗпе пынӑ, сирӗлнӗ тинӗс тӗпӗпе каç-
нӑ. 2 Пӗлӗтпе тата тинӗс шывӗпе тӗне кӗрсе вӗсем пурте Моисей-
па пӗрлӗхлӗ пулса тӑнӑ. 3 Вӗсем пурте чун-чӗмӗн пӗр апатне

çинӗ. 4 Вӗсем пурте чун-чӗмӗн пӗр ӗçмине ӗçнӗ: ту чулӗнчен
çăлкуç тапса тăнă, чун-чӗм чулӗ вӗсемпе пӗрлех пынă. Çав чул
вăл Христос пулнă. 5 Анчах та вӗсен хушшинче Турра юрăхлă
пурăнакансем сахал пулнă, çавăнпа та ытларахăшӗ пуш хиртех
выртса юлнă. 6 Эпир те мăн асаттесем пекех усаллине сăхланас-
ран Турă пире çакнашкал тӗслӗхсемпе асăрхаттарнă. 7 Вӗсенчен
хăшӗ-пӗри пек кӗлеткесене ан пуççапăр. Çырнинче вӗсем пирки
çапла каланă: «Халăх ӗçме-çиме ларнă, унтан вăййа тухнă». 8 Вӗ-
сенчен хăшӗ-пӗри пек аскăн та пăсăк пулар мар. Пăсăк пурăннă-
ран вӗсенчен çирӗм виçӗ пинӗшӗ пӗр кунтах пӗтнӗ. 9 Христоса
тӗрӗслер мар. Вӗсенчен хăшӗ-пӗри çапла хăтланнă та – çӗленсем
сăхнипе вилсе пӗтнӗ. 10 Вӗсенчен хăшӗ-пӗри пек ан ӳпкелешӗр.
Вӗсем ӳпкелешнӗ те – вӗсене чунилли пӗтернӗ. 11 Çаксем пурте
малашлăх сăнарӗсем пулнă. Пире, тӗнче пӗтес вăхăтра пурăна-
кансене, ăса кӗртмешкӗн çав тӗслӗхсем çинчен çырса хăварнă
та ӗнтӗ. 12 Çавăнпа хăйне çирӗп тăратăп тесе шухăшлакан ӳкес-
рен асăрхантăр. 13 Эсир куракан тӗрӗслев этем тӳсмелӗх кăна.
Турра шанăр. Вăл сирӗн пуçăр çине чăтма пултарнинчен ытла
тӗрӗслев яма хушмӗ. Тӗрӗсленӗ чухне чăтса ирттермелӗх сире çă-
маллăх та парӗ.

14 Çапла вара, савнă тăвансем, кӗлеткесене пуççапассинчен пă-
рăнса çӳрӗр. 15 Сирӗнпе эпӗ ăслă-тăнлă çынсемпе калаçнă пек
калаçатăп. Мӗн калани пирки вара хăвăр шухăшлăр. 16 Эпир
пиллӗх куркинчен пиллесе ӗçни Христос Юнӗпе хутшăнни пул-
масть-и вара? Хамăр хуçса çиекен çăкăра çини Христос Ӳчӗпе
пӗрлешни пулмасть-и вара? 17 Çăкăрӗ пӗрре, çав çăкăра валеççе
çинӗрен эпир те нумаййăн пӗр ӳт пулса тăратпăр. 18 Израиль
йăхӗнчисене пăхăр-ха. Парне вырăнӗ çинчи çимӗçе çисе вӗсем
парне кӳрес ӗçе хутшăнмаççӗ-и? 19 Мӗн каласшăн-ха эпӗ? Пуç-
çапмалли кӗлетке е чӳк çимӗçӗ мӗне те пулин пӗлтерет тес-
шӗн-и? 20 Паллах, апла мар. Урăх халăхсем парнине Турра мар,
усал сывлăшсене кӳреççӗ тесшӗн. Манăн вара сире усал сывлăш-
семпе хутшăнтарас килмест. 21 Хуçа Турă куркинчен ӗçнӗ ху-
шăрах эсир усал сывлăш куркинчен те ӗçеймӗр. Хуçа Турă сӗтелӗ
хушшинче ларнă вăхăтрах усал сывлăш сӗтелӗ хушшинче хăнала-
наймăр. 22 Хуçа Туррăмăра пирӗн кӗвӗçтерсе тарăхтарас килет-ши?
Эпир Унран вăйлăрах-им вара?

*Пӗтӗмпех Турӑ мухтавӗшӗн тӑвар*

[23] Манӑн тем тума та ирӗк пур, анчах пурте усӑллӑ мар. Манӑн
тем тума та ирӗк пур, анчах пурте ырӑлӑхлӑ мар. [24] Никам та хӑй-
шӗн кӑна ан тӑрӑштӑр, ҫынна усӑ тӑвасчӗ тесе тимлетӗр. [25] Таса
чунлӑ юлас тесен, сутуҫӑран илнӗ аша пӗр тиркемесӗр ҫиййӗр.
[26] Мӗншӗн тесен ҫак ҫӗр те, ҫӗр ҫинчи те пӗтӗмпех Хуҫа Туррӑн.
[27] Калӑпӑр, ӗненмен ҫынсенчен кам та пулин сире хӑнана чӗнет.
Эсир кайма килӗшетӗр. Таса чунлӑ юлас тесен мӗн сӗннине пӗр
тиркемесӗр ҫиййӗр. [28] Анчах кам та пулин сире: «Ку чӳк ҫимӗ-
ҫӗ», – тесе каласан, ан ҫиййӗр. Ҫапла туни сӗнекен ҫыншӑн та,
чуна таса хӑвармашкӑн та кирлӗ. Мӗншӗн тесен ҫак ҫӗр те, ҫӗр
ҫинчи те пӗтӗмпех Хуҫа Туррӑн*. [29] Чуна таса хӑвармашкӑн тесе
эпӗ сирӗн пирки мар, ҫав ҫын пирки калатӑп. Манӑн ирӗклӗхӗм
ҫын чунӗ умӗнче яваплӑ мар. [30] Эпӗ Турра тав туса ҫиетӗп пул-
сан, тав туса ҫинӗ ҫимӗҫшӗн мана мӗншӗн хурламалла? [31] Ҫапла
вара, ӗҫетӗр-и, ҫиетӗр-и е мӗн те пулин урӑххине тӑватӑр-и –
пӗтӗмпех Турӑ мухтавӗшӗн тӑвӑр. [32] Иудейсемшӗн те, грексем-
шӗн те, Турӑ чиркӗвӗшӗн те ҫылӑха кӗмелли сӑлтав пулас марччӗ
тесе пурӑнӑр. [33] Манашкал пулӑр. Эпӗ пур тӗлӗшӗнчен те пурне
те юрама тӑрӑшатӑп. Нумайӑшӗ ҫӑлӑнччӑр тесе, хамшӑн мар, ыт-
ти ҫынсен ырӑлӑхӗшӗн тӑрӑшатӑп.

## 11-мӗш сыпӑк

[1] Эпӗ Христосран тӗслӗх илнӗ пек, эсир те манран тӗслӗх илӗр.

*Кӗлӗре ҫӳҫ-пуҫа витесси*

[2] Эй, тӑвансем! Эпӗ мӗн каланине йӑлтах асра тытнӑшӑн, эпӗ
вӗрентсе хӑварнӑ Хуҫа Турӑ йӑли-йӗркипе пурӑннӑшӑн сире ыр-
латӑп. [3] Тата сире ҫакна пӗлтерессӗм килет: кирек епле арҫын-
шӑн та Христос пуҫ пулса тӑрать, упӑшки те арӑмӗшӗн – пуҫ,
Турӑ та Христосшӑн – пуҫ. [4] Пуҫне тӑхӑнса кӗлтӑвакан е пророк-
ла сӑмах калакан кирек епле арҫын та хӑйӗн пуҫне намӑс кӑтар-
тать. [5] Ҫӳҫ-пуҫне витмесӗр кӗлтӑвакан е пророкла сӑмах калакан
кирек епле хӗрарӑм та хӑйӗн пуҫне намӑс кӑтартать. Вӑл ҫапла

* [10:28] Хӑш-пӗр авалхи ал ҫырусенче юлашки пуплев ҫук.

туни ҫӳҫне хыртарса янипе пӗрех. [6] Хӗрарӑм ҫӳҫ-пуҫне витмест
пулсан, эппин ҫӳҫне кастартӑр. Ҫӳҫ кастарма е хыртарма вӑта-
нать пулсан, эппин ҫӳҫ-пуҫне хуплатӑр. [7] Арҫыннӑн кӗлӗре ҫара
пуҫӑн пулмалла, мӗншӗн тесен вӑл Турӑ сӑнарӗпе мухтавӗ. Хӗра-
рӑм вара – упӑшкин мухтавӗ. [8] Арҫынна хӗрарӑмран пултарман,
хӗрарӑма арҫынтан пултарнӑ. [9] Арҫынна хӗрарӑмшӑн туман, хӗ-
рарӑма арҫыншӑн тунӑ. [10] Ҫавӑнпа та хӗрарӑмӑн хӑйӗн пуҫне пӑ-
хӑну паллипе витмелле. Тата унӑн ҫакна ангелсене кӑтартмаш-
кӑн тумалла. [11] Тепӗр тесен, Хуҫамӑр вӗрентнӗ тӑрӑх, упӑшки
арӑмӗсӗр, арӑмӗ упӑшкисӗр ним тӗшне те тӑмасть. [12] Мӗншӗн те-
сен малтанхи хӗрарӑма арҫынтан тунӑ пекех, арҫын та хӗрарӑм-
ран ҫуралать. Пурне те вара Турӑ пултарнӑ. [13] Хӑвӑрах шухӑшласа
пӑхӑр-ха, витмен пуҫпа Турра кӗлтуни хӗрарӑма килӗшӳллӗ-и?
[14] Ҫӳҫне-пуҫне ӳстерсе янӑ арҫын хисепрен тухни ҫинчен ҫут
ҫанталӑк хӑех калать. [15] Хӗрарӑмшӑн вара ҫӳҫ ӳстерни – хисеп,
ҫут ҫанталӑк хӗрарӑма виткӗч вырӑнне вӑрӑм ҫӳҫ панӑ. [16] Хампа
тавлашас текене вара ҫакна кӑна калатӑп: пирӗн патӑрта та, Тур-
рӑн ытти чиркӗвӗсенче те унашкал йӑла ҫук.

*Хуҫамӑрӑн аслӑ каҫхи апачӗ ҫинчен*

[17] Ӗнтӗ, сире вӗрентсе, хам ырламанни ҫинчен калам. Сирӗн
пухӑвӑрсем сире уссинчен ытларах сиен кӳреҫҫӗ. [18] Чи малтанах,
хам мӗн илтни ҫинчен: чиркӳ пухӑвне пуҫтарӑнсан эсир пӗр-пӗ-
ринпе харкашатӑр иккен. Ҫакна эпӗ пӑртак ӗненетӗп те. [19] Мӗн-
шӗн тесен чӑн-чӑн ӗненекенсем палӑрмашкӑн сирӗн хушшӑрта
тӗрлӗ шухӑшлӑх пулмаллах. [20] Тата ҫакна каламалла: эсир пӗрле
пуҫтарӑнатӑр пулин те, ҫакна Хуҫамӑрӑн аслӑ каҫхи апатне туни
теме ҫук. [21] Мӗншӗн тесен кашниех харпӑр хӑй апатне часрах ҫи-
се ярасшӑн. Ҫапла вара пӗри выҫах юлать, тепри тутӑ та хӗрӗнкӗ.
[22] Сирӗн килӗрсем ҫук-им? Килте ӗҫсе-ҫиейместӗр-им? Е Туррӑн
чиркӗвне ним вырӑнне те хумастӑр-и? Ҫук ҫынсене хур тӑвас те-
тӗр-и? Мӗнех калам? Сире ҫакӑншӑн ырлам-и? Ырламӑп.

[23] Ҫак йӑлана эпӗ Хуҫамӑртан Хӑйӗнчен вӗрентӗм, кайран сире
вӗрентрӗм. Хӑйне сутнӑ каҫ Иисус Хуҫамӑр ҫӑкӑр илнӗ те, [24] Тур-
ра тав туса, ҫӑкӑра хуҫнӑ. Унтан Вӑл ҫапла каланӑ: «Илӗр, ҫийӗр,
ҫакӑ – сирӗншӗн хуҫӑлакан Манӑн Ӳт-пӗвӗм. Малашне те Мана
аса илсе ҫак йӑлана тӑвӑр». [25] Каҫхи апат хыҫҫӑн, ҫавнашкалах,
Вӑл курка илнӗ те ҫапла каланӑ: «Ҫак курка – Манӑн Юнӑмпа

çирӗплетнӗ Çӗнӗ Халал. Ăна ӗçнӗ чух кирек хăçан та Мана аса
илсе çак йăлана тăвăр». 26 Ӗнтӗ эсир çав çăкăра çимессерен, çав
куркана ӗçмессерен Хуçамăр тепре киличченех Вăл вилни çин-
чен хыпарлатăр.

*Аслă каçхи апата тивӗçсӗр туни*

27 Çапла вара, Хуçамăрăн çăкăрне тивӗçсӗр çиекен, Хуçамăрăн
куркине тивӗçсӗр ӗçекен çын Хуçамăрăн Ӳчӗпе Юнне хирӗç
çылăх тăвать. 28 Малтан çын хăйне хăй тӗрӗслесе пăхтăр, унтан
тин çав çăкăра çитӗр, çав куркана ӗçтӗр. 29 Кам тивӗçсӗр ӗçсе
çиет, çав хăйне айăплав илмешкӗн ӗçсе çиет, мӗншӗн тесен вăл
Хуçамăрăн Ӳчӗ çинчен шухăшламасть. 30 Акă мӗншӗн сирӗн хуш-
шăрта халсăррисем, чирлисем нумай; вилекенсем те йышлă.
31 Эпир хамăра хамăр хаклама пултарсан Турă пире айăпламӗччӗ.
32 Пире хак параканӗ вара – Турă. Ытти пӗтӗм тӗнчепе пӗрле суд
умне тăрас мар тесессӗн Хуçа Турă айăплавне пирӗн чăтмалла.
33 Çавăнпа та, тăванăмсем, аслă каçхи апата пуçтаръннă чухне
пӗр-пӗрне кӗтӗр. 34 Турă сирӗн пухăва ан айăплатăр тесен çиес
текен килте çитӗр. Ыттине хам пырсан йӗркене кӗртӗп.

## 12-мӗш сыпăк

*Турă Сывлăшӗн парнисем*

1 Эй, тăвансем! Манăн сире Турă Сывлăшӗн парнисем пирки
пӗлтермесӗр хăварас килмест. 2 Чăн Турра пӗлмен чухне пуççап-
малли чӗлхесӗр кӗлеткесем патне сире вăйпах темскер ертсе кай-
нине хăвăрах пӗлетӗр. 3 Çавăнпа та сире çакна калатăп: Турă
Сывлăшӗ хавхалантарнипе калаçакансенчен пӗри те Иисуса ыл-
ханмӗ. Святой Сывлăш хавхалантарнипе калаçакансемсӗр пуçне
Иисуса Хуçам тесе никам та калаймӗ. 4 Çынсене тӗрлӗрен пул-
тарулăх панă, анчах та Сывлăш – пӗрре. 5 Турăшăн та çынсем
тӗрлӗрен тăрăшаççӗ, анчах та Хуçа Турă – пӗрре. 6 Çынсен ӗçӗ-
сем те тӗрлӗрен, анчах пурин ăшӗнче те пурне те туса тăракан
Турă – пӗрре. 7 Сывлăш кашни çыннах пӗрлехи ырлăхшăн тă-
рăшмашкăн пултарулăх панă. 8 Пӗрне Сывлăш урлă ăслăлăх сă-
махне панă, тепӗрне çав Сывлăшах пӗлӳлӗх сăмахне панă. 9 Пӗр-
не Сывлăш урлă ӗненес пултарулăх панă, тепӗрне çав Сывлă-
шах сыватас пултарулăх панă. 10 Хăшне хăват кăтартма, хăшне

пророкла калаҫма, хӑшне ырӑ тата усал сывлӑшсене уйӑрма,
хӑшне тӗрлӗ чӗлхепе калаҫма, хӑшне тӗрлӗ чӗлхепе каланине
ӑнлантарма пултарулӑх панӑ. [11] Ҫаксене йӑлтах пӗр Сывлӑш ту-
са тӑрать; Вӑл, Хӑйне кирлӗ пек, кашни ҫыннах уйрӑм пулта-
рулӑх парать.

*Эпир — пӗр ӳт-пӳ*

[12] Пӗр ӳт-пӗвех нумай пайсенчен тӑрать, нумай пулин те, пур-
те пӗрле пӗр ӳт-пӳ тӑваҫҫӗ. Христос та ҫавнашкалах. [13] Мӗншӗн
тесен пӗр Сывлӑшпа тӗне кӗрсе эпир пурте — иудейсемпе грек-
сем те, чурасемпе ирӗклисем те — пӗр ӳт-пӳ пултӑмӑр, пӗр Сыв-
лӑшпа тултӑмӑр. [14] Ӳт-пӳ вара пӗр пайран мар, нумай пайсенчен
тӑрать. [15] «Эпӗ алӑ мар, эппин ӳт-пӗвӗн те мар», — тесе каланӑ-
шӑн ура ӳт-пӳ пайӗ пулма пӑрахать-и? [16] «Эпӗ куҫ мар, эппин
ӳт-пӗвӗн те мар», — тесе каланӑшӑн хӑлха ӳт-пӳ пайӗ пулма пӑ-
рахать-и? [17] Пӗтӗм кӗлетке курмалли пайран тӑрсассӑн, мӗнпе
илтӗн? Пӗтӗм кӗлетке илтмелли пайран тӑрсассӑн, мӗнпе шӑршӑ
пӗлӗн? [18] Анчах та Турӑ ӳт-пӳ пайӗсене Хӑйне кирлӗ пек пӗр
ӳт-пӗве чӑмӑртаса вырнаҫтарнӑ. [19] Пурте ӳт-пӗвӗн пӗр пайӗ пулас
пулсассӑн, ӳт-пӗвӗ хӑй ӑҫта пулӗччӗ? [20] Капла вара ӳт-пӳ пайӗсем
нумай, ӳт-пӗвӗ — пӗрре. [21] «Эсӗ мана кирлӗ мар», — тесе куҫ алла
калаймӗ. Пуҫ та урана: «Эсӗ мана кирлӗ мар», — тееймӗ. [22] Пачах
та урӑхла! Чи хавшак пек туйӑнакан ӳт-пӳ пайӗсем кирлӗрех те!
[23] Чаплӑ мар текен ӳт-пӳ пайӗсене вара эпир питӗ асӑрхаса уп-
ратпӑр. [24] Илемсӗр, намӑс вырӑнсене тирпейлӗн хуплатпӑр, илем-
лине апла туни кирлӗ те мар. Анчах та Турӑ, тивӗҫсӗр текенни-
семшӗн ытларах тӑрӑштарса, пӗтӗм ӳт-пӗве шайлаштарнӑ. [25] Ҫак-
на Вӑл ӳт-пӳ пайӗсен пӗр-пӗрне уйӑрасси ан пултӑр, пур пайӗ
те пӗр-пӗриншӗн пӗрешкел тӑрӑштӑр тесе тунӑ. [26] Ҫавӑнпа та
ӳт-пӗвӗн пӗр-пӗр пайӗ асаплансан ыттисем те асапланаҫҫӗ,
пӗр-пӗр пайӗ хисеплӗ пулсан ыттисем те савӑнаҫҫӗ.

[27] Эсир вара — Христос ӳт-пӗвӗ, уйрӑмшарӑн — ӳт-пӳ пайӗсем.
[28] Ӗненекен ушкӑнра Турӑ хӑшне апостол тунӑ, хӑшне — пророк,
тата тепӗрне — вӗрентекен. Турӑ хӑшне хӑват кӑтартма вӑй панӑ,
хӑшне сыватас пултарулӑх панӑ. Ҫавнашкалах хӑшне пулӑшас
пултарулӑх, хӑшне ертсе пырас пултарулӑх, тата теприсене тӗрлӗ
чӗлхепе калаҫас пултарулӑх панӑ. [29] Пурте апостол-и? Пурте про-
рок-и? Пурте вӗрентекен-и? Пурте хӑват кӑтартакан-и? [30] Пурин

те сыватас пултарулӑх пур-и? Пурте тӗрлӗ чӗлхесемпе калаҫаҫ-
ҫӗ-и? Тӗрлӗ чӗлхепе каланине пурте ӑнлантарса параяҫҫӗ-и?
31 Ҫапах та пурте тата пысӑкрах пултарулӑх илесчӗ тесе тӑрӑшӑр,
эпӗ вара сире тата лайӑхрах ҫул-йӗр кӑтартса парӑп.

## 13-мӗш сыпӑк

*Юратулӑх*

1 Этем чӗлхипе калаҫсан та, ангел чӗлхипе калаҫсан та, хам
юратулӑхсӑр пулсан, эппин эпӗ — янӑракан чан е чӑнкӑртатакан
кимвал ҫеҫ. 2 Манӑн пророк пултарулӑхӗ пур пулсан та, пӗтӗм
вӑрттӑнлӑхпа пӗлӗве ӑнкаратӑп пулсан та, тусене вырӑнтан ку-
ҫармалӑх ҫирӗп ӗненӳллӗ пулсан та, хам юратулӑхсӑр пулсан, эп-
пин эпӗ ним тӗшне те тӑмастӑп. 3 Эпӗ пӗтӗм пурлӑхӑма валеҫсе
пӗтерсен те, ӳт-пӗвӗме вута пӑрахма килӗшсен те, хам юратулӑх-
сӑр пулсан, эппин мана ҫавӑнтан ним усси те пулас ҫук.

4 Юратулӑх ҫирӗп тӳсӗмлӗ, хӗрхенӳллӗ; юратулӑх кӗвӗҫмест,
вӗҫкӗнленмест, мӑнкӑмӑлланмасть, 5 сӗмсӗрленмест, хӑйшӗн кӑ-
на тӑрӑшмасть, тарӑхмасть, усаллине асра тытмасть; 6 суяшӑн
мар, чӑнлӑхшӑн савӑнать. 7 Юратулӑх йӑлтах каҫарать, пурне те
ӗненет, яланах шанать, теме те тӳссе ирттерет. 8 Пророкла кала-
нисем вӗҫленӗҫ, чӗлхесем ҫухалӗҫ, пӗлӳ пӑрахӑҫа тухӗ — юрату-
лӑх нихӑҫан та пӗтмӗ. 9 Мӗншӗн тесен эпир кӑштах пӗлкелетпӗр,
кӑштах пророкла калаҫкалатпӑр; 10 чи пахи килсен вара кӑш-
таххи пӑрахӑҫланӗ. 11 Ача чухне эпӗ ачалла калаҫаттӑм, ачалла
шухӑшлаттӑм, ачалла ӑнланаттӑм. Ар ҫулне ҫитсессӗн ача-пӑча
шухӑшне пӑрахрӑм. 12 Халӗ эпир тӗксӗм кантӑк витӗр курнӑ пек
уҫӑмсӑррӑн куратпӑр, анчах та пӗррехинче Турра уҫҫӑн, ку-
ҫа-куҫӑн курӑпӑр. Халӗ эпӗ кӑшт кӑна пӗлкелетӗп, ун чухне вара
эпӗ Турра Вӑл хама пӗлнӗ пекех пӗлӗп. 13 Ӗнтӗ ҫаксем виҫҫӗшӗ:
ӗненӳ, шанчӑк, юратулӑх — ӗмӗр-ӗмӗр пулӗҫ, анчах та аслӑрах-
хи — юратулӑх.

## 14-мӗш сыпӑк

*Чӗлхесем тата пророкла калаҫасси*

1 Юратулӑх патне ӑнтӑлӑр. Турӑ Сывлӑшӗн парнисене, уйрӑм-
мӑнах пророкла калаҫас пултарулӑха, илме тӑрӑшӑр. 2 Пӗлмен

чӗлхепе калаҫакан вара ҫынсемпе мар, Турӑпа калаҫать. Ӑна
никам та ӑнланмасть, мӗншӗн тесен вӑрттӑнлӑха вӑл Турӑ Сыв-
лӑшӗн витӗмӗпе пӗлтерет. 3 Пророкла калаҫакан вара ҫынсене
ӳкӗтлесе, хавхалантарса, лӑплантарса калаҫать. 4 Пӗлмен чӗлхепе
калаҫакан хӑйне хӑй ҫирӗплетет, пророкла калаҫакан вара ӗне-
некен ушкӑна ҫирӗплетет. 5 Манӑн сире пурне те ҫапла пултарас
килет: тӗрлӗ чӗлхесемпе калаҫни аван, пророкла калаҫма пӗлни
тата аванрах. Пророкла калаҫакан тӗрлӗ чӗлхесемпе калаҫакан-
тан ҫӳлерех тӑрать. Чӑн та, тӗрлӗ чӗлхепе калаҫакан, чиркӗве
ҫирӗплетес тесе, хӑй сӑмахӗсене ӑнлантарса парсассӑн пророкла
калаҫаканпа танлашма пултарать.

6 Эй, тӑванӑмсем! Калӑпӑр, эпӗ сирӗн патӑра пырсан пӗлмен
чӗлхесемпе калаҫӑп. Ҫав хушӑрах эпӗ сире Турӑ вӑрттӑнлӑхне
уҫса памасан, пӗлӳ памасан, пророкла калаҫмасан, вӗрентмесен
сире мӗн усси пулӗ? 7 Тӗслӗх вырӑнне кӗвӗ каламалли чунсӑр ха-
тӗрсене – шӑхличе е кӗслене – илер. Шӑхличпе кӗсле уҫӑмсӑр
сасӑсем кӑлараҫҫӗ пулсан, вӗсемпе мӗнле ҫемӗ каланине епле
пӗлеес? 8 Уҫӑмлӑ мар труба сассипе кам ҫапӑҫӑва хатӗрленӗ?
9 Ҫавнашкалах эсир калакан сӑмахсем ӑнланмалла мар пулсан,
мӗн каланине ҫынсем епле пӗлччӗр? Ку вӑл ҫиле калани кӑна
пулать. 10 Тӗнчере мӗн чухлӗ сӑмах! Пӗлтерӗшсӗрри вара пӗри те
ҫук. 11 Анчах та эпӗ хампа калаҫаканӑн сӑмахӗсем мӗне пӗлтер-
нине ӑнланмастӑп пулсан, эпӗ уншӑн ют халӑх ҫынни пулатӑп.
Вӑл та маншӑн ҫавнашкалах. 12 Эсир те, Турӑ Сывлӑшӗн парни-
сене илме ӑнтӑлса, чиркӗве ҫирӗплетмешкӗн вӗсене ытлӑн-ҫит-
лӗн илме тӑрӑшӑр. 13 Ҫавӑнпа та пӗлмен чӗлхепе калаҫакан ҫын
ӑнлантарса пама пултарулӑх илесчӗ тесе кӗлтутӑр. 14 Мӗншӗн
тесен пӗлмен чӗлхепе кӗлтунӑ чухне чунӑм кӗлтӑвать пулин те,
ӑсӑм кӗлтума хутшӑнмасть. 15 Апла мӗн тӑвам-ха? Турра чунӑмпа
кӗлтӑвам, ӑсӑмпа та кӗлтӑвам. Турра чунӑмпа мухтаса юрлам,
ӑсӑмпа та мухтаса юрлам. 16 Енчен те эсӗ Турра чунтан мухтаса
тав тӑватӑн пулсан та, сана итлесе тӑракан ахаль ҫын: «чӑнах та,
ҫапла» тееймӗ. Эсӗ мӗн каланине вӑл ӑнланмасть-ҫке-ха. 17 Ҫап-
ла вара, эсӗ Турра тем тери мухтаса кӗлтусан та, ҫакӑ ыттисене
усса пымасть. 18 Тавах Туррӑма! Пӗлмен чӗлхесемпе калаҫма эпӗ
сирӗнтен пуринчен те ытларах пултаратӑп. 19 Анчах та эпӗ, ытти-
сене ӑс парас тесе, вӗсем пӗлмен чӗлхепе чиркӳре пин-пин сӑ-
мах каличчен ӑнланмалла пилӗк сӑмах калам.

[20] Эй, тӑвансем! Ача ӑслӗ ан пулӑр. Усалли тӗлӗшӗнчен ача пек
пулӑр, анчах та ӑс-хакӑл тӗлӗшӗнчен ҫитӗнсе ҫитнисем пек пу-
лӑр. [21] Саккунра ҫапла ҫырнӑ: «„Ҫак халӑхпа ют чӗлхепе, урӑх
халӑх ҫыннисен чӗлхи-ҫӑварӗпе калаҫӑп, ун чухне те вӗсем Мана
итлемӗҫ“, – тет Хуҫа Турӑ». [22] Ҫапла вара, тӗрлӗ чӗлхесемпе ка-
лаҫни – ӗненекенсем валли мар, ӗненменнисем валли Турӑ янӑ
паллӑ. Пророкла калаҫни вара – ӗненменнисем валли мар, ӗне-
некенсем валли Турӑ янӑ паллӑ. [23] Пӗтӗм чиркӳ пӗрле пуҫтарӑнса
пӗлмен чӗлхесемпе калаҫнӑ чухне унта ахаль ҫынсем е ӗненмен-
нисем пырса кӗрес пулсан мӗн калӗҫ? «Кусем ӑсран тайӑлнӑ», –
темӗҫ-и? [24] Енчен те пурте пророкла калаҫас пулсан вара унта
ахаль ҫын е ӗненменни пырса кӗрсен хӑйне питлесе, айӑпласа
каланине илтӗ. [25] Ҫапла майпа унӑн вӑрттӑн шухӑш-кӑмӑлӗ палӑ-
рӗ, вӑл Турра чӗркуҫленсе пуҫҫапӗ те: «Турӑ чӑнласах та си-
рӗнпе», – тейӗ.

*Мӗн туни йӑлтах йӗркеллӗ пултӑр*

[26] Ҫапла вара, тӑвансем, мӗн тумалла-ха? Акӑ эсир чиркӳ пу-
хӑвне пуҫтарӑнатӑр. Пӗри псалом ӑсти, тепри ӳкӗт ӑсти, тата
тепри тӗрлӗ чӗлхе ӑсти. Хӑшӗн Турӑ вӑрттӑнлӑхне уҫма, теприн
ӑнлантарса пама пултарулӑх пур. Пурте вӗсем чиркӗве ҫирӗплет-
мешкӗн усӑллӑ пулччӑр. [27] Хӑшӗ-пӗри пӗлмен чӗлхепе калаҫать
пулсассӑн, иккӗн, е чи нумаййи – виҫҫӗн, черетпе калаҫчӑр, пӗ-
ри ӑнлантарса патӑр. [28] Ӑнлантаракан ҫук пулсан, вӗсем чиркӳре
шӑпӑрт тӑччӑр, хӑйсен ӑшӗнче Турӑпа калаҫчӑр. [29] Ҫавнашкалах
пророкла калаҫакансем те иккӗн е виҫҫӗн калаҫчӑр, ыттисем ва-
ра мӗн илтнине сӳтсе явччӑр. [30] Ларакансенчен пӗрне Турӑ вӑрт-
тӑнлӑхӗ уҫӑлса кайсассӑн, малтан калаҫаканӗ чарӑнтӑр. [31] Пурте
вӗренме, хастарланма пултарччӑр тесен эсир черетпе пророкла
калаҫма пултаратӑр вӗт-ха. [32] Хӑйсене хавхалану кӳрекен сыв-
лӑшсене пророксем итлеттерме пултараҫҫӗ. [33] Мӗншӗн тесен Ту-
рӑ вӑл – хирӗҫӳлӗх Турри мар, канӑҫлӑх Турри.

Ӗненекенсем пуҫтарӑнакан ытти чиркӳсенчи пекех [34] сирӗн
хӗрарӑмсем те чиркӳре чӗнмесӗр тӑччӑр. Вӗсен калаҫмалла мар,
саккун хушнӑ пек, пӑхӑнмалла. [35] Мӗн те пулин пӗлес тесен ун
ҫинчен вӗсем упӑшкисенчен килте ыйтчӑр. Хӗрарӑм чиркӳре ка-
лаҫни килӗшӳллӗ мар. [36] Тӑвансем! Турӑ сӑмахӗ сирӗнтен тух-
нӑ-им? Е сирӗн патӑра кӑна ҫитнӗ-им? [37] Хӑйне пророк вырӑнне

е Турӑ Сывлӑшӗллӗ ҫын вырӑнне хуракан эпӗ сирӗн патӑра
ҫырни Хуҫамӑрӑн пил-хушӑвӗ пулнине ӑнлантӑр. 38 Ӑнланай-
манни вара ӑнланманнипех юлтӑр. 39 Ҫапла вара, тӑвансемӗр,
пророкла калаҫасчӗ тесе тӑрӑшӑр, тӗрлӗрен пӗлмен чӗлхесемпе
калаҫма та ан чарӑр. 40 Анчах мӗн туни йӑлтах килӗшӳллӗ те йӗр-
келлӗ пултӑр.

## 15-мӗш сыпӑк

*Христос чӗрӗлни*

1 Эй, тӑвансем! Эпӗ сире хам пӗлтернӗ Ырӑ Хыпара татах аса
илтеретӗп. Эсир ӑна йышӑнтӑр, унпа тӗреклентӗр. 2 Эпӗ вӗрент-
нине ҫирӗп тытса пырсан, ҫиелтен кӑна ӗненмен пулсан, эсир
Ырӑ Хыпарпа ҫӑлӑнӑр. 3 Мӗншӗн тесен эпӗ сире чӑн малтанах
хам мӗн йышӑннине патӑм: Ҫырнинче каланӑ пекех, Христос
пирӗн ҫылӑхсемшӗн вилнӗ. 4 Ҫырнинче каланӑ пекех, Ӑна пы-
тарнӑ, виҫҫӗмӗш кунне Вӑл чӗрӗлсе тӑнӑ. 5 Малтан Вӑл Кифӑна
курӑннӑ, кайран — Вун иккӗшне, 6 тепринче тата пӗр вӑхӑтрах
пилӗк ҫӗр ытла тӑванӑмӑра курӑннӑ. Вӗсенчен хӑшӗ-хӑшӗ вилнӗ
ӗнтӗ, анчах ытларахӑшӗ халӗ те пурӑнаҫҫӗ-ха. 7 Унтан Вӑл Иако-
ва курӑннӑ, каярахпа — ытти мӗн пур апостолсене. 8 Юлашкин-
чен вара Вӑл мана, юрӑхсӑра, курӑнчӗ. 9 Туррӑн чиркӗвне хӗсӗр-
ленӗрен эпӗ хама апостолсенчен чи хисепсӗрри, апостол ятне те
тивӗҫсӗрри тесе шутлатӑп. 10 Анчах та Турӑ ырӑлӑхне пула эпӗ
хальхи пек пулса тӑтӑм. Ӑшӑмри Унӑн ырӑлӑхӗ усӑсӑр пулма-
рӗ, эпӗ апостолсенчен пуринчен те ытларах вӑй хурса ӗҫлерӗм.
Тепӗр тесен, вӑй хураканӗ эпӗ мар, ӑшӑмри Турӑ ырӑлӑхӗ.
11 Эпир пурте Ырӑ Хыпара пӗрешкел вӗрентетпӗр, эсир пурте
ҫавна ӗнентӗр.

*Вилнисем чӗрӗлесси*

12 Эпир сире Христос вилӗмрен чӗрӗлсе тӑнӑ тесе вӗрентет-
пӗр пулсан, епле-ха сирӗнтен хӑшӗ-пӗри вилнисем чӗрӗлмеҫҫӗ
теме хӑять? 13 Вилнисем чӗрӗлмеҫҫӗ пулсан Христос та чӗрӗл-
мен пулать. 14 Христос чӗрӗлсе тӑман пулсан вара эпир вӗрент-
ни те, эсир ӗненни те кӑлӑхах. 15 Вилнисем чӑнласах чӗрӗлмеҫ-
ҫӗ пулсан эпир сире Турӑ ҫинчен суйса пӗлтернӗ пек пулать.
Мӗншӗн тесен эпир чӗрӗлсе тӑман Христоса Турӑ чӗртнӗ тесе

çирĕплететпĕр. 16 Вилнисем чĕрĕлмеççĕ пулсан Христос та чĕрĕл-
мен пулать. 17 Христос чĕрĕлмен пулсан эсир ĕненни кăлăхах:
эсир çылăхăрсенчен тасалман пулать. 18 Эппин Христоса ĕненсе
вилнисем те яланлăхах пĕтнĕ пулать. 19 Христос пире хальхи пу-
рăнăçра кăна шанчăк парать пулсан эпир этемсенчен чи телей-
сĕррисем пулăттăмăр.

20 Анчах та Христос вилĕмрен чĕрĕлсе тăнă, Вăл – пирвайхи.
21 Тĕнчене вилĕм этем урлă килнĕ пекех, чĕрĕлсе тăрасси те этем
урлах. 22 Адамран пулнисем пурте вилĕмлĕ пекех, Христоса ĕне-
некенсем пурте чĕрĕлĕхлĕ. 23 Анчах та кашнин хăйĕн черечĕ:
Христос вилнисенчен чи малтан чĕрĕлнĕ; Вăл тепре килсен вара
Хăйĕннисене чĕртĕ. 24 Мĕн пур пуçлăха, влаçа, вăй-хăвата пăра-
хăçласа, Христос Хăйĕн Патшалăхне Ашшĕне, Турра, парсан ва-
ра вĕçĕ çитĕ. 25 Мĕншĕн тесен Унăн Хăйĕн тăшманĕсене ури
айне тăвичченех патша пулмалла. 26 Путинчен кайран вара Вăл
юлашки тăшманне – вилĕме – пĕтерĕ. 27 Мĕншĕн тесен Турă
пурне те Унăн умне ўксе пăхăнмалла тунă. Пурне те Ăна пăхăн-
тарнă тенĕ пулин те, паллă ĕнтĕ, пурне те Унăн аллине панă Ту-
рă ку шута кĕмест. 28 Пурне те Христоса пăхăнтарсан вара Ывăлĕ
те пурне те Хăй аллине панă Турра пăхăнĕ, вара Турă пĕтĕмпех
пурин ăшĕнче те пулĕ.

29 Апла мар пулсан, вилнисемшĕн тĕне кĕрекенсем мĕншĕн
çапла тăваççĕ-ха? Вилнисем чĕрĕлмеççĕ пулсан, вĕсемшĕн мĕн
тĕне кĕмелли пур? 30 Мĕншĕн эппин эпир те пĕрмаях хĕн-хур
куратпăр? 31 Эпĕ Иисус Христос Хуçамăр умĕнче сирĕнпе мă-
наçланатăп. Çав мăнаçлăхпа тупа туса калатăп: эпĕ кашни кунах
вилĕмпе куçа-куçăн. 32 Этемле шухăшласа каласан, эпĕ Ефесра
тискер кайăксемпе çапăçнин мĕн усси? Вилнисем чĕрĕлмеççĕ
пулсан, атьăр эппин çиер те ĕçер, ыран çавах вилмелле! 33 Ан ул-
таланăр: усал юлташсем ырă кăмăллă çынна та пăсаççĕ. 34 Тăна
кĕрĕр, йĕркеллĕ, çылăхсăр пурăнăр. Сире намăс пултăр та, анчах
çакна калатăп: сирĕнтен хăшĕ-пĕри Турра пĕлмест.

*Чĕрĕлнĕ ўт-кўлепе*

35 Хăшĕ-пĕри çапла ыйтĕ: «Вилнисем епле чĕрĕлсе тăрĕç? Вĕ-
сем мĕнле ўт-кўлепеллĕ пулĕç?» 36 Эй, ăссăрскер! Эсĕ мĕн акни
хăй пĕтмесĕр чĕрĕлĕх памасть. 37 Тулă е урăх тырă-пулă акнă чух-
не эсĕ ўсен-тăран кўлепине мар, çара пĕрчĕ акатăн. 38 Кайран

вара Турӑ ӑна Хӑй парас тенӗ пек кӳлепе парать, кашни вӑрлӑ-
хӑн – хӑйӗн кӳлепи. 39 Кӳлеписем вара тӗрлӗрен: этемӗн хӑйне
май, выльӑх-чӗрлӗхӗн хӑйне май, пуллӑн хӑйне май, кайӑк-кӗ-
шӗкӗн хӑйне май. 40 Тӳпере те, ҫӗр ҫинче те кӳлепесем пур. Тӳ-
перисен хӑйсен чапӗ, ҫӗр ҫинчисен – хӑйсен. 41 Хӗвел хӑйне май
чаплӑ, уйӑх хӑйне май чаплӑ, ҫӑлтӑрсем хӑйне май чаплӑ. Ҫӑл-
тӑрпала ҫӑлтӑр чапӗ те пӗр мар.

42 Вилнисем чӗрӗлсе тӑрасси те ҫавнашкалах. Ҫӗрекен ӳт ҫӗре
кӗрет, ҫӗрми пулса чӗрӗлсе тӑрать. 43 Ҫӗр айне пытарни чапсӑр,
чӗрӗлсе тӑраканни чаплӑ. Ҫӗр айне пытарни халсӑр, чӗрӗлсе тӑ-
раканни хӑватлӑ. 44 Чунлӑ пулни ҫӗре кӗрет, чун-чӗмлӗ пуласси
чӗрӗлсе тӑрать. Чунлӑ ӳт-кӳлепе пур пулсассӑн, эппин чун-чӗм-
ли те пур. 45 Ҫырнинче ҫапла каланӑ та: «Малтанхи этем, Адам,
чӗрӗ чунлӑ пулса тӑнӑ». Кайранхи Адам вара чӗрӗ тӑвакан
чун-чӗмлӗ. 46 Анчах та малтан чун-чӗмли мар, чунли пулать.
Кайран тин чун-чӗмли пулать. 47 Малтанхи этем – ҫӗртен, ту-
сантан пулнӑ, кайранхи вара – тӳперен аннӑ Хуҫамӑр. 48 Тусан-
тан пулнӑ малтанхи этем мӗнле, ыттисем те ҫавнашкал. Тӳпе-
рен анни мӗнле, ыттисем те ҫавнашкал. 49 Эпир тусантан пулнин
сӑнарӗпе епле ҫӳренӗ, ҫавнашкалах тӳперен аннин сӑнарӗпе
ҫӳрӗпӗр.

50 Анчах та, тӑванӑмсем, сире акӑ мӗн калам: ӳтпе юн Турӑ
Патшалӑхне кӗреймеҫҫӗ, ҫӗрекенни ҫӗрмен ҫӗре кӗреймест.
51-52 Тата сире ҫак вӑрттӑнлӑха пӗлтерем: эпир пуртех те вил-
местпӗр, анчах пурте улшӑнатпӑр. Улшӑнасса вара пурте пӗр
самантрах, юлашки труба сасси илтӗнсенех улшӑнатпӑр. Труба
кӑшкӑртсан вара вилнисем ҫӗрми чӗрӗлсе тӑрӗҫ, эпир улшӑнӑ-
пӑр. 53 Мӗншӗн тесен ҫӗрекен ӳт-пӗвӗн ҫӗрми пулса тӑмалла, ви-
лӗмлӗ ӳт-пӗвӗн вилӗмсӗр пулса тӑмалла. 54 Ҫӗрекен ӳт-пӳ ҫӗрми
пулсан, вилӗмлӗ ӳт-пӳ вилӗмсӗр пулсан вара Ҫырнинче: «Вилӗ-
ме тӗппипех ҫӗнтернӗ», – тени пурнӑҫланӗ. 55 «Эй, вилӗм! Ӑҫта
санӑн сӑнну? Эй, тамӑк! Ӑҫта санӑн ҫӗнтерӗвӳ?» 56 Вилӗм сӑн-
ни – ҫылӑх, ҫылӑх вӑйӗ вара саккунранах килет. 57 Иисус Хрис-
тос Хуҫамӑр урлӑ пире ҫӗнтерӳ панӑшӑн тавах Турра! 58 Эй, савнӑ
тӑванӑмсем! Ӗнтӗ ҫирӗп те иккӗленӳсӗр пулӑр. Хуҫамӑр ӗҫӗшӗн
яланах пӗтӗм чуна парса тӑрӑшӑр, эсир тӑрӑшни Хуҫа Турӑ
умӗнче усӑсӑр пулманнине пӗлсе тӑрӑр.

## 16-мӗш сыпӑк

*Чухӑн ӗненекенсене пулӑшасси*

[1] Чухӑн ӗненекенсем валли пулӑшу пуҫтарнӑ чухне эпӗ Галати-
ри ӗненекен ушкӑнсене хушнӑ пек тӑвӑр. [2] Эпӗ сирӗн патӑра
пырсан тин пуҫтармалла ан пултӑр тесен, сирӗнтен кашниех эр-
нен малтанхи кунӗнче хӑй пултарнӑ таран уйӑрса хурса упратӑр.
[3] Эпӗ вара, пырсассӑн, пухнӑ пулӑшӑва Иерусалима леҫме хӑвӑр
суйласа илнӗ ҫынсене хут ҫырса парса ярӑп. [4] Хамӑн та каймалла
пулсассӑн вӗсем манпа пырӗҫ.

*Ҫул ҫӳреме палӑртса хуни*

[5] Македони тӑрӑхӗсенче ҫӳресе ҫавӑрӑнсассӑн вара сирӗн патӑ-
ра ҫитӗп, мӗншӗн тесен эпӗ Македони урлӑ пыма шухӑшлатӑп.
[6] Пӗр вӑхӑт эпӗ сирӗн патӑрта пурӑнасшӑн, тен, хӗл каҫӑп та,
кайран вара эсир мана каяс ҫӗре ӑсатса ярӑр. [7] Хальхинче эпӗ си-
рӗнпе ҫула май кӑна курнӑҫасшӑн мар, Хуҫа Турӑ пулӑшсан,
сирӗн патӑрта пӗр вӑхӑт пурӑнасса шанатӑп. [8] Ефесра вара эпӗ
Аллӑмӗш кун уявӗччен пулӑп. [9] Турӑшӑн тӑрӑшса ӗҫлемешкӗн
кунта лайӑх майсем уҫӑлчӗҫ, тӑшмансем те нумай. [10] Тимофей
сирӗн патӑра ҫитсессӗн унӑн нимрен те хӑраса пурӑнмалла ан
пултӑрччӗ тесе тӑрӑшӑр. Хуҫамӑр ӗҫӗшӗн вӑл манашкалах ҫунать.
[11] Ҫавӑнпа та сирӗн хушшӑрта ун ҫине ҫӳлтен пӑхакан ан пултӑр.
Ман патӑма тавӑрӑнмашкӑн ӑна эсир кӑмӑллӑн ҫула пуҫтарӑр.
Эпӗ ӑна кунта ӗненекен тӑванӑмсемпе пӗрле кӗтетӗп. [12] Аполлос
тӑванӑмӑр пирки вара ҫакна каламалла: сирӗн патӑра ытти тӑ-
вансемпе пӗрле пыма эпӗ ӑна питӗ тархасларӑм, анчах та вӑл
халь пыма кӑмӑл тумарӗ. Майлӑрах вӑхӑт тупӑнсассӑн пырӗ.

*Ҫыру вӗҫӗнче ыйтни. Саламсем*

[13] Сыхӑ тӑрӑр, ӗненӳре ҫирӗп пулӑр, паттӑр та вӑйлӑ пулӑр.
[14] Мӗн тунине йӑлтах юратса тӑвӑр. [15] Эй, тӑвансем! Манӑн си-
рӗнтен акӑ мӗн пирки ыйтмалли пур. Эсир Стефан кил-йышне,
вӗсем Ахаияри малтанхи ӗненекенсем пулнине пӗлетӗр. Вӗсем
ӗненекенсемшӗн ырми-канми тӑрӑшаҫҫӗ. [16] Эсир ҫав малтанхи
ӗненекенсемпе сӑпайлӑ пулӑр, Турӑшӑн тӑрӑшса ӗҫлекенсене та-
та пулӑшакансене пурне те хисеплӗр. [17] Стефан, Фортунат тата

Ахаик кунта килсе çитни мана савăнтарчĕ, хам сирĕнпе пулман-
ни те ытлах сисĕнмест. 18 Вĕсем ман чунăма та, сирĕн чунăра та
лăплантарчĕç. Ун пек çынсене хисеплĕр.

19 Аси тăрăхĕнчи ĕненекен ушкăнсем сире салам яраççĕ. Уй-
рăммăнах сире Акилăпа Прискилла тата вĕсем патĕнче пухăна-
кан ĕненекен ушкăнрисем Хуçа Турă ячĕпе салам калаççĕ. 20 Мĕн
пур ĕненекен тăвансенчен сире салам. Эсир те пĕр-пĕрне сă-
ваплăн, тăванла чуптуса саламлăр. 21 Куна хамăн аллăмпах çыра-
тăп: эпĕ, Павел, сире салам яратăп. 22 Иисус Христос Хуçамăра
юратман çынсене вара ылхан пултăр. Килсемччĕ, Хуçамăр! 23 Сире
Иисус Христос Хуçамăрăн ырăлăхĕ пултăр. 24 Эпĕ сире, Христос
Иисуса ĕненекенсене, пурне те юрататăп. Аминь.